Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

40 (7571) № * Юн кун, 2008 çулхи майăн (çу) 28-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Умра – Республика кунĕ

## Уяв асра юлĕ



Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министрĕ Р.М. Лизакова район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа, унăн çумĕпе-культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçипе А.Е. Андреевапа районти историпе краеведени музейĕнчи пулас çĕнĕлĕхсене сӳтсе явать.

*Вăхăт иртни те сисĕнмест. Республика кунĕ çитиччен вăхăт сахаллансах пырать. Районта хатĕрленӳ ĕçĕсем малалла пыраççĕ. Иртнĕ шăмат кун пирĕн района Чăваш Республикин культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министрĕ Р. М. Лизакова килсе кайрĕ. Вăл район пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа тата унăн çумĕпе – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçипе А.Е. Андреевапа пĕрле Республика кунĕнче уçăлмалли культура объекчĕсенче пулса курчĕ: район центрĕнчи физкультурăпа спорт комплексĕнче (унта искусство шкулĕ те пулать), Кашмашри тĕслĕхлĕ Культура çуртĕнче тата районти историпе краеведени музейĕнче. Роза Михайловна хатĕрленӳ ĕçĕсем япăх мар пынине, мĕн çине тата ытларах тимлĕх уйăрмаллине палăртрĕ.*

*– Кашмашра уçăлакан тĕслĕхлĕ Культура çурчĕ республикăра пĕрремĕш пулать. Çавăнпа та Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн ялсенчи Культура çурчĕсене тĕслĕхлĕ туса хурасси çинчен калакан Указĕ мĕнле пурнăçа кĕрессинче Кашмашсем епле ĕçлени пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем ку çĕнĕлĕхре тĕслĕх пулса тăраççĕ, – терĕ министр.* *(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).*

**Республика кунне районта уявличчен 27 кун юлчĕ**

Уяв умĕн

## Республика кунĕн программи пуян

Çу уйăхĕн 23-мĕшĕнче Правительство çурчĕн Пĕчĕк залĕнче 2008 çулта Республика Кунне хатĕрленсе иртерес енĕпе ĕçлекен йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ пулнă.

Промышленноçпа энергетика министрĕн çумĕ Наталья Дмитриева тата Чăваш Республикин Суту-илӳпе промышленноç палатин президенчĕ Игорь Кустарин Раççейри «Раççей инновацийĕсене – Раççей капиталĕ» 1 форума мĕнле хатĕрленни çинчен пĕлтернĕ. Программăна 16 мероприяти кĕрет, çав шутра – стратеги конференцийĕ, çавра сĕтелсем, семинарсем, презентацисем, мастер-классем, куравсем, «MegGalaxy» культурăпа кану центрĕ тĕп площадка пулса тăрĕ. Форума чикĕ леш енчи çĕршывсен, Раççей регионĕсен делегацийĕсем, влаç органĕсен, вĕренӳ заведенийĕсен, предприятисемпе организацисен представителĕсем хутшăнаççĕ. «Раççей инновацийĕсене – Раççей капиталĕ» 1 форум ĕçне Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Атăлçи федераци округĕнчи полномочиллĕ представителĕ Григорий Рапота хутшăнма палăртнă. Шупашкарти «Управлени. Экономика. Ааталану» масштаблă экономика форумĕ Республика Кунĕн уяв программин курăмлă пулăмĕ пулĕ. Экономика аталанăвĕпе суту-илӳ министрĕ Иван Моторин пĕлтернĕ тăрăх, Интернет сетĕнче www.chebef.ru адреспа форум сайчĕ ĕçлет, Чăваш Республикин влаç органĕсен официаллă порталĕнче баннер вырнаçтарнă. Унта пĕтĕм информацие пухнă. Шупашкарта ирттерме палăртнă форума чикĕ леш енчи патшалăхсен посолĕсем, экономика миссийĕсен пуçлăхĕсем, федераци субъекчĕсен представителĕсем, журналистсем хытă кăсăкланаççĕ. Шупашкарти экономика форумĕн ĕçне Раççей Федерацийĕн регионсен аталанăвĕн министрĕ Дмитрий Козак, Раççей Перекет банкĕн Правленийĕн председателĕ Герман Греф, Раççей промышленникĕсемпе предпринимательсен союзĕн президенчĕ Александр Шохин хутшăнасса палăртнă. Форум вăхăтĕнче çавăн пекех йăлана кĕнĕ йĕркепе «Регионсем – чикĕсĕр çыхăнусем» регионсен куравĕ иртет.

Республика Кунĕн анлă культура программине туса хатĕрленĕ. Чăваш Енре пурăнакансемпе хăнасем килĕштерекен «Раççей çăл куçĕсем» Пĕтĕм Раççейри халăх пултарулăхĕн фестивалĕпе, «Раççей маçтăрĕсем» Пĕтĕм Раççейри декораципе прикладной искусство ăстисен япалисен конкурсĕпе пĕрле уяв кунĕсенче пуçласа «Раççей юррисем» Пĕтĕм Раççейри фестиваль-марафон иртет.

Унта Надежда Бабкина тата «Вырăс юрри» ансамбль, фольклор коллективĕсем хутшăнаççĕ. Çакăн çинчен йĕркелӳ комитечĕн членĕсене ЧР культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министрĕ Роза Лизакова пĕлтернĕ.

Ларура çавăн пекех социаллă пысăк пĕлтерĕшлĕ социаллă объектсене хута ярассипе, Йĕпреçпе Муркаш районĕсенче Республика Кунне иртерессипе, Чăваш Ен тĕп хулине уяв тĕлне илемлетессипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.

**ЧР ПА пресс-службы.**

Республикăра

## Пысăк ĕçе кашниех хутшăнтăр

Çу уйăхĕн 22-мĕшĕнче Правительство çурчĕн Пĕчĕк залĕнче Чăваш Республикин Стратеги аталанăвĕ енĕпе ĕçлекен канашĕн ларăвĕ иртнĕ.

Пухăннисем 2007 çул кăтартăвĕсене тĕпе хурса Чăваш Республикин 2020 çулччёнхи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн стратегине пурнăçласси çинчен калакан çулленхи доклад проектне сӳтсе явнă, малашнехи ĕçре усă курмалли сĕнӳсем хатĕрленĕ. Докладра статистикăпа çыхăннă йăнăшсем пуррине, хаклав методики кивелнине палăртнă.

Ларăва вĕçленĕ май сĕнӳсемпе асăрхаттарусене шута илсе Канаш членĕсем документ ятне урăхларах палăртма сĕннĕ: «2007 çул кăтартăвĕсене тĕпе хурса Чăваш Республикин 2020 çулччёнхи социаллă пурнăçпа культура тата экономика аталанăвĕн стратегине пурнăçласси çинчен калакан доклад». «Карап лайăх иштĕр тесен ăна тĕрĕс ят памалла», – тенĕ Канаш членĕсем.

## Инвестицисем пулĕç

Иртнĕ эрнере Правительство çуртĕнче республикăн Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Сергей Гапликов БИНБАНК президенчĕпе Михаил Шишхановпа курнăçнă.

Тĕл пулура Чăваш Енре тĕрлĕ инвестици проектне пурнăçа кĕртессин малашлăхĕпе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă.

Тĕл пулăва çавăн пекех Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ Павел Семенов хутшăннă.

## Библиотекарьсен ĕç укçи ӳсмелле

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров правительство членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Николай Федоров тунти кунхи канашлура çакăн пирки уйăрммăн каланă: муниципалитетсен пĕрлĕхĕсен Интернет сетĕнчи вулавăшсен тухăçлă ĕçне тивĕçтермелле. Çавăн пекех Президент библиотекăсенче ĕçлекенсен ĕç укçи ӳссе пыма тивĕçлине палăртнă, Министрсен Кабинечĕн Председательне Сергей Гапликова тата Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн пĕрремĕш çумне – финанс министрне Николай Смирнова çак ыйтăва оперативлă пăхса тухма хушнă.

**ХИСЕПЛĔ БИБЛИОТЕКАРЬСЕМ, ÇАК ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ ТАТА ВУЛАКАНСЕМ!**

Ĕнер Пĕтĕм Раççейри библиотекăсен кунне паллă турăмăр. Халăхăн ăс-хакăлпа культурине аталантарас, çитĕнекен ăрăва воспитани парас ĕçре библиотекăсем пысăк пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Эсир çынсене кĕнекепе туслашма, ун урлă пурнăçа юратма, хаклама, илемлĕхе туйма вĕрентетĕр. Тавах сире çакăншăн.

Халăха тĕрлĕ информаци парасси те сирĕн тĕп тивĕçех шутланать. Паян районта çĕнĕ ĕмĕрти çĕнĕ технологие тĕпе хурса, 30 тĕслĕхлĕ библиотека ĕçлет. Вĕсенче Интернета тухса тĕрлĕ информаци илме пулать. Районта çавăн пекех çак библиотекăсен 9 филиалĕ те халăх юратакан вырăн шутланать. Библиотекăсен ĕçне йĕркелесе пыма «Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи централизациленĕ библиотека» муниципаллă культура учреждени йĕркеленчĕ.

Хисеплĕ библиотекарьсем! Сире пурне те хăвăрăн професси уявĕпе саламлатăп. Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек туса пырасса шанатăп. Пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, юрату сунатăп. Ĕçĕр яланах ăнса пытăр, хавхалану туйăмĕ пĕрре те ан иксĕлтĕр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

Ĕç коллективĕсенче

## Çĕнĕлĕхсене алла илеççĕ



*«Çĕр кадастрĕн палати» федераллă патшалăх учрежденийĕн Муркашри филиалĕ 2002 çулхи декабрĕн 27-мĕшĕнченпе ĕçлет. Унăн тĕп тĕллевĕ – патшалăх çĕр кадастрне йĕркелесе пырасси тата çав çĕрсем çинчи куçман пурлăха шута илесси. Рынок тапхăрĕнчи питех те ответлă ĕç. Çакăнта вăй хуракан хĕрарăмсем вара хăйсене шаннă ĕçе ответлăха туйса пурнăçлаççĕ, хăйсен тăрăшулăхĕпе вĕсем республикăра та ыррисен шутĕнче. Эсир сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла филиалăн ертсе пыракан инженерне Марина Николаевна Любимована, филиал ертӳçине Светлана Юрьевна Сорокинана, Марина Алексеевна Бубнова специалиста, Светлана Николаевна Звонкова ертсе пыракан инженера куратăр.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Юбилей

## Саламлатпăр



Мăн Токшик ялĕнче пурăнакан **Юрий Григорьевич ГРИГОРЬЕВА** 60 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чунтан, ăшă кăмăлпа суламлатпăр. Киров ячĕллĕ хуçалăхра нумай çул лашасене юратса пăхса, çулсеренех хаклă парнесем илсе пытăн. Килти хушма хуçалăхра паянхи кунччченех лаша усраса хамăра та, ял çыннисене те пулăшу кӳме яланах хатĕр. Хаклă çыннăмăр, эпир санпа мăнаçланатпăр, эс пуришĕн савăнатпăр. Юбилей кунĕ ячĕпе саламласа ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Яланах çывăх тăванусемпе, ял-йышпа ĕмĕр вĕçне çитиччченех савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕ, çывăх тăванĕсем.**

Çырăнтару – 2008

## «Çĕнтерӳ ялавне» малалла çырăнтараççĕ

**Район хаçатне 2008 çулхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ.**

**Ултă уйăха çырăнса илмелли çĕнĕ хак - 181 тенкĕ те 80 пус. Малтанхипе танлаштарсан, райхаçата ултă уйăха çырăнса илмелли хак 12 тенкĕ те 18 пус çеç ӳсрĕ.**